К.В. Иванов çинчен унăн амăшĕ Евдокия Васильевна Иванова аса илни / Н. Данилов çырса илнĕ // Чăваш коммунĕ. – 1940. – 29 авăн.

# К. В. Иванов çинчен унăн амăшĕ Евдокия Васильевна Иванова*) аса илни

Эпĕ хам Кайраклăсем, Тетеçлĕ Васлей хĕрĕ пулнă. Эпир кирçĕм пĕр тăван ÿснĕ: икĕ хĕр те пĕр ывăл. Çăварнипе 24 çул тултарсан, çинĕкре 120 тенкĕ хулăмла çураçса, мана Слакпуçне Писсăр Васçиккине качча пачĕç. Пуранаттăмăр пурĕ пиллĕкĕн: эпĕ, ман упăшка, эпĕ, тата упăшка шăллĕне йăмăкĕ.

Çулталанăран манăн малтанхи ача Кĕçтентин çуралчĕ.

Кĕçтентин çамрăк чухнех питĕ йăваш ачаччĕ. Урамра ачасемпе выляссах çÿремесчĕ. Картишĕнче ларатчĕ те, тăмран ĕнесем, лашасем, сурăхсем туса аташатчĕ. Ытти ачасем те пуçтаранатчĕç ун патне, вăл вĕсене те тăмран вылямалли япаласем туса вĕрентетчĕ.

Йăвашне кура Кĕçтентине пурте, асламăшĕ те, кукаçейĕсем те питĕ юрататчĕç. Асламăшĕ, эпир уйăрăлса тухсан, ăна пĕрехмай хăй патне илсе каятчĕ.

— Çывăрма асаннесем патне каятăп. — тесе тухса каятчĕ вара Кĕçтентин вĕсем патне.

Кукашшĕсем те ăна килмессерен хăйсем патне илсе каятчĕç. Кукашшĕсен 40 — 45 вĕлле пурччĕ. Пыльне вара Кĕçтентин хире чашкăпах илсе тухатчĕ. тет те, кĕписене пылпа вараласа пĕтерсен, кукамăшне вăрттăн:

— Кукамай, кĕпи какка, — тесе калатчĕ, тет.

Кукамăшĕ ăна халлапсем те калакала кăтартнă пулас. Тата кукамăшĕсемпе юнашарах Макçăм пиччĕ текен вĕрÿçĕ пурăнатчĕ. Кĕçтентин çавăн патне çÿресе, тĕрлĕ хăйне кирлĕ япаласем çыра-çыра илетчĕ.

Пĕр сакăр çул тултарсан, Кĕçтентине хамăр ялти шкулах вĕренме патăмăр. Шкулта Кĕçтентин аван вĕренетчĕ, учитель ырлатчĕ ăна. Вĕреннĕ чухне шавах кĕнекесем вулатчĕ.

Чĕмпĕрте вĕреннĕ чухне Кĕçтентин каникул çулах, кашни хĕл кăшт киле таврăнса пурнатчĕ. Унчухне вăл хирти ĕçе пытех каймен. Час-часах Василий Григорьевич ятлă учитель патне çÿретчĕ. Хăш чухне вĕсем ун патĕнче ирччен ларса ирттеретчĕç.

— Мĕн туса ларатăр унта?—тесе ыйтсан, вăл:

— Вулатпăр, çыратпăр, тĕрлĕ япаласем çинчен калаçатпăр ,— тетчĕ.

Чĕмпĕрти шкултан кăларса ярсан та, Кĕçтентин килте нумай пурăнмарĕ. Часах таçта тухса кайрĕ.

Килте чирлесе пурăннă чухне Кĕçтентин мана питĕ хĕрхенетчĕ.

— Эй, анне, çитĕ ĕнтĕ сана ĕçлесе, ывăнтăн пулĕ пайан, вырт-са кан, — тетчĕ. Е, кÿршĕ-пĕлĕшсем ачипчи килсен, вĕсене вара мана çулăхма пастарнăтчĕ.—Ан çыпçăнăр-ха анненe, вăл ахаль те ывăннă, — тетчĕ.

Ман ĕçе çăмăллатас тесе, вăл мана çавăрса çу уçламалли уйран çÿпçи туса панăччĕ. Çамрăк чухне пыва та кайса килетчĕ. Пирĕн пыва кайсан, çырмаран тăвалла улăхмалла. Квентесемпе пынине курсан, Кĕçтентин квентесене илетчĕ те чупатчĕ. Шывне çуршар витре тултаратчĕ те таврăнатчĕ.

Килте çынсем çук чухне, Кĕçтентин урай çăвассинчен те именсе тăмастчĕ. Пĕрре тата икерчĕ пĕçернĕ чухне ман пата пычĕ те:

— Эсĕ тарланă, анне, кÿр-ха хам пĕçерем, — терĕ те икерчĕ пĕçере пуçларĕ.

Усал çитĕнсен ĕнтĕ Кĕçтентин кĕлетпе лаç хушшинче йăлтах йывăçсем лартса тултарчĕ. Кĕлет тăррине те хăех сăрласа тухрĕ.

Кĕçтентин çын килсен-тусан та питĕ кăмăллăччĕ.

— Анне, лайăхрах пăх хăнасене,— тетчĕ вăл.

Ашшĕ Кĕçтентине питĕ юрататчĕ.

Вăл хăй те ашшĕне нихăçан та сивĕ сăмах каламан.

Пĕрре 1911 — 1912-мĕш çулсенче, эпир Васликкăпа пĕрле Кĕçтентин патне Чĕмпĕре кайса куртăмăр. Унпа пĕрле унта виç-тăват çĕре те хăнана çитсе килтĕмĕр.

Пĕрре такшин патĕнче çапла кăмака çумне таянса ларнă чухне Иван Яковлевич пычĕ кĕчĕ те:

— Э, хăнасем килнĕ, иккен. Аннÿ те килнĕ-им? — терĕ.

— Аттепе анне те, йăмăк та килнĕ çав, — терĕ Кĕçтентин.

Чирлесен Кĕçтентин шавах чĕрĕлессе шанатчĕ. Пĕрре эпĕ сăрă кĕпе тăхăнтăм та:

— Эй, анне, эсĕ хитре кĕпе тăхăннă, иккен. Сывалсан эпĕ, те çапла тăхăнăп-ха, — терĕ.

Кĕçтентин вилсен, йĕре-йĕре пулĕ çав, пĕтĕм шăлăмсем ÿксе пĕтрĕç. Сывлăхăм йăлтах начарланса кайрĕ. Ашшĕ те питĕ хуйхăрчĕ.

**Н. ДАНИЛОВ çырса илнĕ.**

---

## „Нарспи" поэмăна хăçан çырнă?

Константин Васильевич Иванов хăйĕн «Нарспи» поэмине хăçан çырни çинчен ку таранччен те татăклăн палла пулман. Литературоведсем вăл çинчен «1907—1908 çулсем» тесе кăтартса паратчĕç. Çавăнпа та пурте тенĕ пекех Иванов «Нарспи» поэмăна 1907 — 1908 çулсенче çырнă тесе шутлатчĕç.

Анчах та юлашки документсем Ива-